«Халăх тăрăшнипе – патшалăх пулăшнипе»

# «Халĕ пирĕн Ишмула ялĕнче те çулĕ лайăх, такăр»

Çапла калаççĕ Мăн Сĕнтĕр территори пайĕнчи Ишмула ялĕнче пурăнакан çынсем. Кунта кăçал пуçарулăх бюджечĕн программипе усă курса ял çулне такăрлатма май килнĕ.

Территори пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, мăнсĕнтĕрсем кăçал пуçарулăх бюджечĕн программине хутшăнма комисси суйлавне икĕ проект тăратнă: пĕри – Вомпăкасси ялĕнчи Чăрăшкассинчи урам çулне вак чул сарса хытарасси, тепĕр проект – Ишмула ялĕнчи Ишмула урамĕнчи çулăн пĕр лаптăкне вак чул сарса хытарасси.

Çак вăхăт тĕлне пĕрремĕш проектпа укçа-тенкĕ майлашнă тăрăх ĕçе пурнăçлама хатĕрленеççĕ кăна-ха. Смета хакĕ 2 миллион та 220 пин тенкĕ ытла. Выранти çынсенчен пухнă укçа калăпăшĕ 222 пин тенкĕ ытларах.

Ишмуласен вара пысăк савăнăç, вĕсен халĕ патшалăх пулăшнипе, выранти çынсем хутшăннипе тахçантанпа кĕтнĕ такăр çул пур.

– Чăнах та ку пирĕншĕн пысăк савăнăç. Çулĕ, шывĕ пулсан пурăнать-ха ял çынни. Çынсем çак çула тума укçа активлă пуçтарчĕç, такăр çул пурне те кирлĕ, çакна кашниех лайăх ăнланать. Патшалăх та пулăшать ĕçсене тума. Подрядчикĕ те йĕркеллĕ пулчĕ, лайăх, хăвăрт ĕçлерĕç. Пĕр эрнере пире такăр çул туса пачĕç. Эпĕ вĕсем мĕнле ĕçленине пăхсах тăтăм, çулĕ пахалăхлă пултăр терĕм. Çулĕ вăрăмах мар, 250 метр кăна. Округ депутатне Вячеслав Александрович Прокопьева ырăпа палăртас килет, вăл çак ĕçе йĕркелеме чылай тăрăшрĕ. Ял çыннисенчен тавах ăна. Ĕçлемелли, юсамалли татах та пур-ха пирĕн, пĕрле пулсан пултарăпăр, – терĕ ялти хастар çын Валентина Матюкова ветеран педагог.



Сăмах май çакна та палăртса хăвармалла, вăл çирĕм иккĕмĕш çул староста ĕçне туса пырать. Яла газ кĕртнĕ чухне ăна çак ĕçе шаннă та çавăнтанпа тăрăшать. Газ проектне тăвассипе чылай ĕçленĕ, хисеплеççĕ Валентина Денисовнăна ял çыннисем. Вăл каланă тăрăх, ялта 1990 çул пуçламăшĕ тĕлне 460 метр çул туса юсанă, ытти пайĕ вара тимлĕхсĕр юлнă. Акă тинех çынсем тăрăшнипе, патшалăх пулăшнипе ун патне те черет çитнĕ.

Кăçал тунă ĕçĕн проект хакĕ 1 миллион та 63 пин тенкĕ ытла. Ял çыннисен тӳпи çак ĕçре 106 пин те 314 тенкĕ ытла, республика бюджетĕнчен 637 пин 884 тенкĕ уйăрнă, выранти бюджетран – 318 пин те 942 тенкĕ.

Çул юсамалли лаптăк 22-мĕшпе 15-мĕш çуртсен хушши пулнă. Ĕç килĕшĕвне Муркаш муниципалитет округ администрацийĕн территорисене хăтлăх кĕртессин тата аталантарассин управленийĕ «КАРЬЕР РЕГИОН» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа тунă. Василий Васейкин ертсе пыракан организаци округри чылай ялта пуçарулăх бюджечĕн программинчи проектсемпе хăтлăх ĕçĕсене пĕрремĕш çул кăна мар тăвать. Мăн Сĕнтĕр территори пайĕ çак организацие лайăх енчен хакларĕ.

# Орининсем тăрăшуллă, пуçаруллă

14 ялтан тăракан Оринин территори пайĕнче пуçаруллă çынсем пурăннине тĕрлĕ ĕçпе çирĕплетме пулать. Нумаях пулмасть Оринин ялĕнче пурăнакансем хăйсен вăйĕпе пĕве таврашне тирпейленĕ. Çак ĕçе Николай Васильев пуçарнă, ыттисем пĕрле ĕçлеме килĕшнĕ. Арçынсем юсав ĕçĕпе тăрăшнă пулсан хĕрарăмсем тутлă яшка пĕçернĕ. Территори пуçлăхĕ Валентина Пушкова каланă тăрăх, пĕве кăна мар, ун таврашĕнчи лаптăк та самай илемленсе тирпейленнĕ, ял çыннисем кирек епле ыйтăва та пĕрле татса пама тăрăшаççĕ.

Ку тăрăхри çынсенчен тĕслĕх илмелле, вĕсем пур ĕçре те хастар. Çеменкасси ялĕн çăви çинче вĕсем часовня тума пуçларĕç. Асăннă ĕç депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕ Павел Вязов йĕркеленипе пулса пырать. «Павел Николаевич пире йывăр тата актуаллă ыйтусене татса пама пулăшать, вăл яланах халăхпа пĕрле», – тет Валентина Пушкова.

Çӳлерех асăннă объектсем – çынсен вăйĕпе тунă ĕçсем. Малаллахи сăмах пуçарулăх бюджечĕн программи пирки пулĕ. Ку мелпе орининсем çулсеренех хастар ĕçлеççĕ. Вĕсен иртнĕ çулхи проекчĕсем ялсенчи шыв пăрăхĕсен сечĕсене юсассипе çыхăннисем пулчĕç, орининсем тăвата проектпа ĕçлерĕç.

Оринин территори пайĕнче кăçал пуçарулăх бюджечĕн пилĕк проекчĕ пурнăçланмалла. **Пĕрремĕш проекчĕ** – Чамăш ялĕнче пĕвене тасатассипе çыхăннă. Ку ĕçе пурнăçлама 480091 тенкĕ ытла кайнă.

– Çак ĕçе тума пире А.Н. Тимофеев уйрăм предприниматель пулăшрĕ. Ĕçсем вăхăтлă та пахалăхлă пычĕç. Пирĕн енчен хирĕçлев çук. Ĕçе июлĕн 1-мĕшĕччен вĕçлерĕç, – терĕ территори пайĕн пуçлăхĕ.

**Иккĕмĕш проект** Вăрманкасси ялĕнчи Северная урам çулне вак чул сарса хытарассипе çыхăннă. Кунти ĕçсене 1 миллион та 900 пин тенкĕлĕх пурнăçланать. Çынсем çак объекта 157 пин тенкĕ ытла хывнă. **Виççĕмĕш проект** та çак ялтах, вăл Южная урамран. Кунта та урам çулне вак чул сарса хытармалла. Проектăн хакĕ 1 миллион та 500 пин тенкĕ. Ял çыннисен тӳпи çак ĕçре 200 пин тенкĕ ытла. Проектсене пурнăçланă май хаксенче хăш-пĕр улшăну пур.

– Пирĕн территоринче пуçарулăх бюджечĕн программипе тăвакан ĕçсем япăх мар пурнăçланса пыраççĕ. Подрядчиксен ĕçне май пур таран хам та тĕрĕслесе тăма тăрăшатăп, ку енĕпе хамăрăн çынсем те активлă, подрядчиксем ĕçленине пăхма тухаççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕччен пирĕн икĕ çул юсассине вĕçлемелле, иккĕшĕ те Вăрманкассинчен, пĕри – Южная урамран, тепри – Северная урамран. М. Шачкина уйрăм предприниматель ĕçсене йĕркеллĕ вĕçлессе шанатпăр, – терĕ пуçлăх.

Тепĕр икĕ проекчĕ пысăк калăпăшли шутĕнче. Мулкачкассинчи ĕç – **тăваттăмĕш проект.** Кунта шыв пăрăхĕсен тытăмне юсаса çĕнетмелле. Смета хакĕ – 3 миллион тенкĕ ытла. Çынсен тӳпи – 300 пин тенкĕ ытла. Мулкачкассисем «Бирса» чикĕллĕ яваплăхлă общество ĕçĕпе кăмăллă. Паллах, шыв пăрăхне юсаса çĕнетни шыв пахалăхĕ çине те пысăк витĕм кӳрет. Ĕç тăвакан организаци çынсене вăрах вăхăт кĕттермен, юсав ĕçне июлĕн 1-мĕшĕччен вĕçленĕ.

Атапай ялĕнчи шыв пăрăхĕсен тытăмне юсассипе те **(ку пиллĕкмĕш проект)** «Бирса» чикĕллĕ яваплăх общество ĕçленĕ. Ку объекта Мулкачкассинчи хыççăн, августăн 1-мĕшĕччен, вĕçленĕ. Ĕç хакĕ 4 миллион та 500 пин тенкĕ ытла. Çынсен тӳпи – 600 пин тенкĕ ытла.

Çапларах ĕçлесе пыраççĕ орининсем.

**Проект Чăваш Ен Цифра министерстви пулăшнипе пурнăçланать.**



Чамăшри тасатнă пĕве.



Атапай ялĕнчи шыв пăрăхĕн çыхăнăвне юсанă.



Мулкачкассинче те ĕçсем кал-кал пынă вăхăт.



Ял çулĕ такăрланать.